# Пирĕн малашлăх. Наци проекчĕсем

# Кашни ача ăнăçлă аталанма пултартăр

***«Образование» наци проекчĕ шайĕнче «Успех каждого ребенка» федераци проекчĕ пурнăçланать. Çак проекта (вăл регион шайĕнче те çак ятпах) Муркаш районĕ те хутшăнать.***

**Асăннă проект хушма пĕлĕвĕн содержанине пур енлĕ çĕнетме, хушма пĕлĕвĕн программисене паха тата тĕрлĕ енлĕ тума, анлăрах сарма тивĕç. Çав программăсен вара вăхăт ыйтнине те, ачасен ыйтăвĕсене те тивĕçтермелле. Проектпа педагогсен, ертӳçĕсен ăсталăхне ӳстерме, хушма пĕлӳ пама кирлĕ инфраструктурăна аталантарма пăхнă.**

Пирĕн районта хушма пĕлӳ паракан 4 учреждени ĕçлет: Ача-пăча пултарулăх çурчĕ, Çамрăк техниксен станцийĕ, Ф. Васильев ячĕллĕ ача-пăча искусство шкулĕ тата «Сывлăх» спорт шкулĕ. Калайкасси, Нискасси, Йӳçкасси шкулĕсен тата «Родничок» ача сачĕн те хушма пĕлӳпе тивĕçтерме ирĕк паракан лицензи пур.

Хушма пĕлĕве районти 5 – 18 çулти ачасен 76,5 процентне явăçтарнă. Асăннă учрежденисенче хушма пĕлӳ парассине тĕрлĕ енпе йĕркеленĕ: çут çанталăкпа наука, техникăлла пултарулăх, туристпа краеведени, художество пултарулăхĕ, физкультурăпа спорт. Ачасем ытларах техникăлла пултарулăх, художество пултарулăх, физкультурăпа спорт кружокĕсемпе секцийĕсене кăмăллани палăрать. Ку вĕренӳ çулĕнче ачасен хушма пĕлĕвĕн «Робототехника» тата «Шахматы» программисем те ăнăçлă ĕçлеççĕ.

Тĕрлĕ ене суйласа илнĕ ачасен тата педагогсен çыхăнăвне эффективлă йĕркелес тĕллевпе Çамрăк техниксен станцийĕнче ачасене хушма пĕлĕвĕн районти центрне туса хунă.

«Успех каждого ребенка» проект шайĕнче укçа-тенкĕне хушма пĕлӳ илекен кашни ачашăн куçарассине, çавна май ача шутне тĕрĕс палăртассине йĕркеленĕ. Ку ĕç хушма пĕлӳ программисен навигаторĕ ĕçленипе çыхăннă. Программа пуриншĕн те уçă, меллĕ. Навигаторпа усă курса çемьесем хăйсен ачин пĕлӳ шайне, туртăмĕсене пĕлсе, ăна хушма пĕлĕвĕн хăш енĕпе пĕлӳ памаллине суйланă. Çапла май кашни ачан сертификат пур. Ку вĕренӳ çулĕнче района пурĕ 1 миллион та 883 пин те 457 тенкĕлĕх 968 сертификат панă.

«Успех каждого ребенка» проект ачасене физкультурăпа спорт занятийĕсем валли пурлăхпа техника базине çĕнетессипе те çыхăннă. 2019 çулта районта Турайри тата Шетмĕпуçĕнчи шкулсен спортзалĕсене тĕпрен



юсаса çĕнетнĕ. Ĕçсене пурĕ 2 миллион ытла тенкĕлĕх пурнăçланă.

Район администрацийĕн вĕренӳ пайĕн пуçлăхĕ Зоя Дипломатова пĕлтернĕ тăрăх, кăçал тепĕр икĕ шкулта – Нискассинчи вăтам тата Сосновка тĕп шкулĕсенче – спортзалсем юсама палăртнă. Кашни объект валли 1 миллион та 300 пин ытла тенкĕ пăхса хунă. Укçа-тенкĕн пысăк пайне федераци бюджетĕнчен уйăрĕç. Ĕçе пурнăçламалли çинчен калакан контрактсене çырнă. Хальхи вăхăтра смета документацийĕсем шăпах экспертиза тухаççĕ. Экспертиза пĕтĕмлетĕвĕ хыççăн аукцион иртерсе ĕçе пурнăçлакан подрядчиксене палăртĕç.

Вĕренекенсене шкулта чухнех професси суйлама пулăшаççĕ. Çак тĕллевпе вĕсем суйласа илнĕ професси компетенцийĕпе уйрăм вĕренӳ планĕпе ĕçлессине пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Районти 21 шкул «ПроеКТОриЯ» порталта регистрациленнĕ. Çак порталта irттернĕ пĕтĕм Раççейри уçă онлайн уроксене районти 628 вĕренекен хутшăннă.

Çавăн пекех районта хушма пĕлӳ паракан учрежденисенче инфраструктура, пурлăхпа техника тата кадр ресурсĕсен инвентаризацийĕн мероприятийĕсене пур-





нăçланă, хушма пĕлĕвĕн навигаторне муниципалитет шайĕнче пуянлатнă – хушма пĕлӳ паракан учрежденисем тивĕçтерекен программăсем йышланнă.

***Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.***

**Выльăх-чĕрлĕх патĕнче**

# Качака усрама меллĕ

*Çулсем пуррине кура кăçал ĕне усрама пăрахрăм. Хĕл каçмалăх вара утти пайтах. Качака усрасан мĕнле-ши? Усăллă сĕнӳ паракан пур-ши?*

**А. ПАВЛОВА.**

Шетмĕпуç ял тăрăхĕ.

**Качака сĕчĕ усăллă пулни пирки паян нумай калаçаççĕ, тĕслĕхсемпе çирĕплетеççĕ. Ăна усрама ĕне-выльăх тытнинчен ансатрах пулнăран-тăр, ялта пурăнакансем сурăхсемпе качакасем усрасси çине тимлĕх ытларах уйăрма пуçларĕç. Çакна шута хурса хамăр тĕпеле паян районти выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станцири выльăх тухтăрне Алина ФЕДОРОВĂНА чĕнтĕмĕр. Вăл çапла сĕнӳсем пачĕ:**

1. Пĕрремĕш утăм вăл – качака туянасси. Ăна валли малтанах хамăр тăрăхра качака тытакансемпе çыхăнмалла, вĕсен ăрачĕсемпе кăсăкланмалла. Муркаш енре пурăнакансем хăйсен килти хушма хуçалăхĕсенче зааненски, альпийски, кубински ăратлă качакасем тытнине пĕлетĕп. Пăхнă чух вĕсем кашниех хăйне май тимлĕх ыйтаççĕ. Çавăнпа та качака туяннă чухне малтанах хуçи ăна мĕнле пăхнине, епле тăрантарнине, качакан характерне ыйтса пĕлмелле. Туяннă хыççăн качакана хăвăр тăрăхри выльăх тухтăрне кăтартма та ан манăр. Çакă унăн сывлăхне тĕрĕс пĕлме май парать.

2. Çак выльăха тӳрех ытлашши нумай çитерме юрамасть. Туянса киле илсе пырсан малтанлăха типĕ утă тата шыв пани те çителĕклĕ.

3. Чĕрчуна гранула апат пани тĕрĕсех мар. Мĕншĕн тесен кунашкал апат пахалăхне куçпа пăхса хаклама май çук. Çавăнпа та алă айĕнче тырă авăртмалли арман пулсан, тĕштырра (качакашăн уйрăмах сĕлĕ аван шутланать) килте кĕрпелентерсе парсан аван.

4. Качака умĕнче утă тата шыв яланах çителĕклĕ пулмалли пирки ан манăр. Сĕт паракан пысăк качакана апат, паллах, нумайрах кирлĕ.

5. Асра тытăр: качакана кӳпĕнтерме пултаракан апат нумай парасран асăрханăр. Çĕр улми, йӳçек силос, çăкăр нумай пани качака хырăмлăхне пăсма пултарать.

6. Качакана хăй çининчен ытларах çитерме-ĕçтерме ан тăрăшăр.

7. Рационта ялан тăвар пулмалла. Анчах ăна апата е шыва хушса мар, çулламалли катăкпа хурса памалла.

8. Сарай-витере апат памалли вырăна тĕрĕс вырнаçтарăр. Куритерен утă нумай тăкăнса сая ан кайтăр. Вăл ялан таса пултăр. Хĕлле те, çулла та качакана ирĕкре çӳретме ан манăр. Çуллахи вăхăтра ăна çарана кăкарса tăратма пулать.



9. Выльăха пĕрремĕш кунрах йĕркене хăнăхтармалла. Çак тĕллевпе ăна ялан пĕр вăхăтра апатлантармалла, шăвармалла, сумалла.

10. Сивĕ вăхăтра витене тăтăш уçăлтарăр, ай сарăмне те улăштарсах тăрăр.

11. Качака килти чĕрчунсенчен ытларах сурăхсемпе тата ĕне-пăрупа килĕштерсе пурăнать. Чăх-чĕппе, хур-кăвакалпа, йытă-кушакпа тата сыснапа вăл туслах мар.

Апат çинчен калаçнă май, пĕр качакана хĕл каçма 500 – 600 килограмм паха утă çителĕклĕ. Унсăр пуçне, паллах, паха тырăпа пахча çимĕç те кирлĕ.

**Пĕлме**

# Сĕтел-пукан туяннă чухне шута илĕр

Сĕтел-пукан туяннин килĕшĕвĕ потребителе касса (тавар) чекĕ панă вăхăтран вăя кĕнĕ шутланать. Сутуçăн потребителе тавара тĕрĕс суйлатăр тесе тулли информаципе паллаштармалла. Тавара кирлĕ вырăна çитерсе, хăпартса е кĕртсе парасси хушма услуга шутланать. Енчен те сĕтел-пукан пуххинче хăш-пĕр пай çитмест пулсан, ун пирки сутуçăна çийĕнчех, гаранти вăхăчĕ тухиччен пĕлтермелле. Тавар хатĕрлекен гаранти тапхăрне палăртасси – ирĕк, тивĕç мар.

Енчен те тавар пирки ыйту сиксе тухрĕ пулсан, ун пирки сутуçă патне çырупа тухмалла, сăмахпа калани документ мар. Çырăва 2 экземплярпа хатĕрлемелле, касса чекĕпе гаранти талонĕ çырупа пĕрле кирлĕ. Ыйтăва килĕшӳллĕн татса пама май килмесен, потребитель хăйĕн правипе саккунлă интересне хӳтĕлессипе суда тухма ирĕклĕ.

**Гигиенăпа эпидемиологи центрĕ.**